Чăваш Республикин вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви
И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕ
Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ

**1-мĕш информаци çырăвĕ**

**Хисеплĕ ĕçтешсем!**

И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕ тата Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ Чăваш Республикин вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви пулăшнипе 2018 çулхи çу уйăхĕн 21–24-мĕшĕнче **«Атăлпа Урал хутлăхĕнчи чĕлхе хутшăнăвĕсем» Пĕтĕм тĕнчери XI симпозиум** иртерет.

Симпозиумра çак ыйтусене пăхса тухма палăртнă:

• фонетикăпа фонологи;
• лексикологипе этимологи;
• литература чĕлхин кун-çулĕ, стилистикăпа пуплев культури;
• лингвокультурологи, социолингвистика т. ыт. те.

Симпозиум ĕçне хутшăнас кăмăллисен 2017 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен http://richfizh.chuvsu.ru/index.php/2-uncategorised/829-simpozium сайтра регистрациленмелле.

Йĕркелӳ комитечĕ доклад темине танлаштаруллă аспектра йĕркелеме ыйтать. Симпозиумра куçару тата танлаштаруллă литература пĕлĕвĕпе çавра сĕтел ирттерме палăртнă.

Иккĕмĕш информаци çырăвне 2017 çулхи октябрьте ярса парăпăр. Унта статьясене техника тĕлĕшĕнчен мĕнлерех йĕркелес, ют çĕр-шыв тĕпчевçисене виза тĕлĕшĕнчен пулăшас пирки çырăпăр.

Йĕркелӳ комитечĕ симпозиума хутшăнакансене командировкăна килме укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен пулăшаймасть.

**Ырăнти комитет адресĕ:**

428015 Чăваш Республики, Шупашкар, Мускав пр., 15. Чăваш патшалăх университетĕнчи вырăс тата чăваш филологийĕпе журналистика факультечĕ. XI симпозиумăн йĕркелӳ комитечĕ.

**Яваплисем:**

+7 919 670 74 49 – Алёна Михайловна Иванова декан;

+7 906 136 28 75 – Ольга Геннадиевна Владимирова, симпозиумăн яваплă çыруçи.

Факс: +7 (8352) 45 02 79 (“А.М. Иванова валли” тесе палăрмалла).

E-mail: shupashkar2018@yandex.ru

Йĕркелӳ комитечĕ.